136 Турă Патшалăхĕ килтĕр!

(Ӳлĕмхине 11:15; 12:10)

1. Иегова, эс — Пултаракан,
Эс — ĕмĕрхи Патша.
Эс власть панă хăв Ывăлна —
Ларать вăл патшара.
Тăрать Патшалăх тӳпере,
Вăл пулĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.

(ХУШСА ЮРЛАМАЛЛИ)

Христос ертсе пырать.
Ак çитрĕ пире çăлас кун.
Ыйтатпăр Турăран:
«Атте, килтĕр Патшалăху!»

2. Паян питĕ йывăр кунсем,
Пире ку хăратмасть.
Шуйттанăн тĕнчи кĕç пĕтет —
Чăн шанчăк вăй парать.
Тăрать Патшалăх тӳпере,
Вăл пулĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.
(Хушса юрламалли)

3. Юрлаççĕ çӳлти ангелсем
Янравлă сасăпа.
Антарнă çапса пĕлĕтрен
Ултавçă Шуйттана.
Тăрать Патшалăх тӳпере,
Вăл пулĕ ĕмĕр-ĕмĕрех.
(Хушса юрламалли)

(Çавăн пекех Дан. 2:34, 35; 2 Кор. 4:18 пăхăр.)

© 2015 Watch Tower Bible and Tract Society of Pennsylvania